Район администрацийĕн кунĕнчен

Ыйтусене пĕрле татса парас пулать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Пĕчĕк мăйăрăн тĕшши, чăн та, тутлă иккен...

Иккĕмĕш ушкăн вĕрентӳ, культура тата сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче пулчĕ. Чи малтанах Тивĕшри фельдшерпа акушер пункчĕн ĕçĕпе паллашрĕç. Ялта пурăнакансем Н.Г. Дмитриева фельдшер ĕçĕпе питĕ кăмăллă. Вăл е ку чиртен сыхланас тесе кунта ятарлă «шкулсем» ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсен сывлăхне те тăтăш тĕрĕслесех тăраççĕ. Эрнере 2 хутчен çулталăка çитмен ачасем патне тухса çÿреççĕ. Укол тутармалла-и е урăхла медицина пулăшăвĕ кирлĕ – урасем кунтах илсе килеççĕ.

– Тепĕр чух чуна уçса калаçма та килетпĕр кунта, – терĕç ĕмĕрĕпех фермăра вăй хунă Р.Д. Ивановапа 30 çул ытла шкул столовăйĕнче ĕçленĕ Р.К. Кузьмина. – Яланах тараватлă кунти сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсем. Фельдшер пункчĕсĕр хамăр мĕнле пурăнасса та пĕлме йывăр. Тавах вĕсене.

Инçех мар вырнаçнă «Незабудка» ача садĕнче те малаллах пăхаççĕ. Пĕчĕк шăпăрлансене валли Аслă Çĕнтерӳ çинчен калакан стенд тунă кунта. Пĕр пÿлĕмре компьютерсем вырнаçтарнă. Кунта ачасем шкула кайма хатĕрленеççĕ. Кунтах талăкĕпе ĕçлекен ушкăн пур. Садике юнашарти Элĕк, Красноармейски, Шупашкар районĕсенчи ялсенчен те ачасем çÿреççĕ иккен. Ача сачĕн заведующийĕн В.А. Федотова сăмахĕнченех палăрнă шухăш ялти библиотека заведующийĕпе Е.Г. Ильинапа калаçнă чух татах та çирĕпленчĕ. Пĕчĕк мăйăрăн тĕшши, чăнах та, тутлă иккен. Ку тăрăхри ялсенче пурăнакансем пĕрпĕринпе туслă пурăнаççĕ. Библиотекăна ытларах çамрăксем компьютерпа рефератсем çырма, ачасем кĕнеке вулама çÿреççĕ, вăл е ку темăпа калаçусем ирттереççĕ. Тивĕшре спорт мероприятийĕсене ирттересси ырă йăлана кĕнĕ. Йĕлтĕрпе çеç чупмаççĕ кунта. Кăçал çанталăк сивĕ пулнипе йĕлтĕрпе ярăнас вырăнне алла çунашка илчĕç ял çыннисем. 7 çултисенчен пуçласа 70 çулти таранах Марки лупашкинче ирттерекен «Хаваслă стартсене» хаваспах хутшăнаççĕ çулсерен. Çамрăксемпе пĕрле ваттисем те скакалкăпа сикнине, обручпа çаврăннине курсан, ку, чăнах та, «Хаваслă стартсем» иккенне тепре курса ĕненетĕн.

Спорт мероприятийĕсене çамрăксем клубра та хутшăнаççĕ. Кунта шашкăла-шахматла, теннисла выляççĕ. Пур – пĕрле, çук – çурмалла, текен ваттисен сăмахĕ те ку тăрăхра пурăнакансем пиркиех пулĕ. Çамрăксем ташă каçĕсем интереслĕ иртчĕр тесе музыка центрĕ валли усилитель илме хăйсем хушшинче укçа пухаççĕ-мĕн. Ку çеç те мар, çемьесем хăйсем те пулăшаççĕ вăл е ку мероприятие ирттерме: активлăхпа та, укçа-тенкĕпе те.

– Николай Ильин çемйи Çĕнĕ çул уявне ирттерме 1 пин тенкĕ укçа парса пулăшрĕ. Бал-маскарада ялсем хушшинче ăмăртуллă йĕркеленĕ май машинисемпе те, вĕсене валли бензинпа та хăйсемех тивĕçтерчĕç. Пурĕ 8 машинăпа кайрăмăр Шетмĕпуçне, – кăмăллă калаçать Елена Германовна.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров килти кивĕ компьютера клуба илсе килсен, ăна та наччасрах юсаса лартса хучĕç.

Клуб ертӳçи О.Н. Ильин пуçаруллă пулнипе те питĕ кăмăллă кунта пурăнакансем.

– Эпир вара ăна пулăшатпăр. Хамăр пурнăçа хамăр интереслĕ тумасан, кам пире интереслĕ пурнăç туса парĕ, – тет Елена Германовна.

Библиотека, садик, клуб – пурте пĕрле пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ кунта. Малаллахи ĕмĕтсемпе пурăнаççĕ.

Ялти сĕтел-пукан тăвакан цехра та пулса курчĕç район администрацийĕн кунне хутшăнакансем. Заказсем çителĕклех иккен. Шăмат-вырсарни кунсенче студентсем те кунта кăштах укçа ĕçлесе илеççĕ.

Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта та, кунти пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче те паянхи кун таппи палăрать. Ялта пурăнакансене валли пур условисем те çителĕклĕ вĕсенче: тарăн пĕлӳ илме, сывлăха çирĕплетме.

Итогсене пĕтĕмлетнĕ май

Район администрацийĕн кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май пухăннисем умĕнче Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Александров, районти патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Илья Смирнов, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Михаил Мясников, çул çитмен çамрăксем енĕпе ĕçлекен подразделени пуçлăхĕ Марина Конузина, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Елена Александрова, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Владислав Ананьев тухса каласрĕç, пĕтĕмĕшле итогсене район пуçлăхĕ Юрий Иванов пĕтĕмлетрĕ.

Ытти ял тăрăхĕсенче район администрацийĕн кунĕсем çак графикпа иртеççĕ:

Ильинка	Февралĕн 17-мĕшĕ
Оринин	Февралĕн 26-мĕшĕ
Хорнуй	Мартăн 10-мĕшĕ
Çатракасси	Мартăн 11-мĕшĕ
Москакасси	Мартăн 12-мĕшĕ
Мăн Сĕнтĕр	Мартăн 16-мĕшĕ
Катькас	Мартăн 18-мĕшĕ
Уйкас Янасал	Мартăн 19-мĕшĕ
Чуманкасси	Мартăн 23-мĕшĕ
Ярославка	Мартăн 25-мĕшĕ
Юнкă	Мартăн 26-мĕшĕ
Ярапайкасси	Мартăн 30-мĕшĕ
Турай	Мартăн 31-мĕшĕ
Муркаш	Апрелĕн 2-мĕшĕ

Пĕтĕмлетсе çавна каласа хăвармалла. Ял тăрăхĕнчи лару-тăру япăххисен шутĕнче мар. Вĕрентӳ, культура, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем хăйсен тивĕçĕсене йĕркеллех пурнăçлаççĕ. Кунта ялсенчи çулсене йĕркене кĕртнĕ, шкул ачисем пулăшнипе йывăçсем лартассипе, тавралăха тирпейлессипе çине тăраççĕ. Ку енĕпе ял тăрăхĕ иртнĕ çулсенче районти ял тăрăхĕсем хушшинче те çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Территорири 3 масар вырăнĕсене те тасатсах тăраççĕ, вĕсенче вырнаçтарма çÿп-çап контейнерĕсем хатĕрленĕ. Ял тăрăхĕ тăрăшнипе çуллен 7 спорт ăмăртăвĕ йĕркелеççĕ. Территорире преступленисем тăвасси чакса пырать. Апла пулин те ялсенче уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче пушарсем тухни шухăшлаттармаллах. Çынсем вилнĕ тĕслĕхсем те пур. ЧР Президенчĕн программипе килĕшӳллĕн 5 урама кăçал çутă кĕртме палăртаççĕ. Кунпа пĕрлех вара ял урамĕсене таса тытасси, пухăнакан çÿп-çапа тиесе тухассине йĕркелесси, шывпа йĕркеллĕ тивĕçтерсе тăрасси ыйтусем çуратаççĕ. Хуçасăр ыйтăсене тытассине те йĕркелемелле.

Çапла, епле пулсан та вырăнсенче ыйтусемсĕр мар. 131-мĕш Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе 5-мĕш çул ĕнтĕ. Вырăнсенчи ыйтусене ăнăçлăрах татса парасси халĕ йăлтах вырăнти влаç органĕсем хăйсен ĕçне-хĕлне епле йĕркелесе туса пыма пултарнинчен, ытти органсемпе çыхăнса ĕçленинчен, çынсене пĕлтерĕшлĕ задачăсене татса пама пĕтĕçтерме пултарнинчен килни куçкĕрет.

Л. ТУКТИНА, В. ШАПОШНИКОВ.

В налоговой инспекции

О повышении размеров государственной пошлины за государственную регистрацию юридических лиц и индивидуальных предпринимателей

Согласно пункту 1 статьи 333.33 Налогового кодекса Российской Федерации (в редакции Федерального закона от 27.12.2009 № 374-ФЗ «О внесении изменений в статью 45 части первой и в главу 25.3 части второй Налогового кодекса РФ и отдельные законодательные акты Российской Федерации, а также о признании утратившим силу Федерального закона «О сборах за выдачу лицензии на осуществление видов деятельности, связанных с производством и оборотом этилового спирта, алкогольной и спиртосодержащей продукции» (опубликован в «Российской газете» 29.12.2009 № 252), **с 30 января 2010 года** устанавливаются новые размеры государственной пошлины за государственную регистрацию юридических лиц и индивидуальных предпринимателей, а также за повторную выдачу свидетельства о государственной регистрации физического лица в качестве индивидуального предпринимателя или свидетельства о государственной регистрации юридического лица:

- за государственную регистрацию юридического лица, за исключением государственной регистрации ликвидации юридических лиц и (или) государственной регистрации политических партий и региональных отделений политических партий, - 4 000 рублей;
- за государственную регистрацию политической партии, а также каждого регионального отделения политической партии - 2 000 рублей;
- за государственную регистрацию изменений, вносимых в учредительные документы юридического лица, а также за государственную регистрацию ликвидации юридического лица, за исключением случаев, когда ликвидация юридического лица производится в порядке применения процедуры банкротства - 800 рублей;
- за государственную регистрацию физического лица в качестве индивидуального предпринимателя - 800 рублей;
- за государственную регистрацию прекращения физическим лицом деятельности в качестве индивидуального предпринимателя – 160 рублей;
- за повторную выдачу свидетельства о государственной регистрации физического лица в качестве индивидуального предпринимателя или свидетельства о государственной регистрации юридического лица - 20 процентов размера государственной пошлины, уплаченной за государственную регистрацию.

При представлении в регистрирующий орган необходимых для государственной регистрации документов **по 29 января 2010 года** включительно, а также при направлении указанных документов по почте (в соответствии с отметкой почтового отделения) до 30 января 2010 года, государственная пошлина подлежит уплате в размерах, установленных пунктом 1 статьи 333.33 Налогового кодекса Российской Федерации, в редакции, действовавшей до 30 января 2010 года.

Межрайонная инспекция Федеральной налоговой службы № 6 по Чувашской Республике.

Призывниксем валли – сĕнӳсем

Алла повестка илтĕр пулсан

Пулас салтаксем, 1993 çулта çуралнисем валли, медкомисси пуçланчĕ. Манăн вара вĕсене сĕнӳсем парас килет.

Çапла вара сан пата повестка килчĕ тейĕпĕр. Повестка илсен санăн çар комиссариатне медкомиссие пымалла. Врачсем вара сывлăха 5 тĕрлĕ хакласçĕ:

А – çар службине юрăхлă;
Б – çар службине пĕчĕк кăлтăксемпе юрăхлă;
В – кăлтăксемпе юрăхлă;
Г – вăхăтлăха çар службине юрăхлă мар;
Д – çар службине юрăхлă мар (анчах çар билетне параççĕ).

Кайран вара призывника призыв комиссийĕн ларăвне чĕнеççĕ.

Халĕ вара повестка пирки. Вăл ахаль хут татки кăна мар. Повесткăра санăн ăçта, хăш кун, миçе сехете пымаллине, унта кăтартнă положенисене пурнăçламасан сана мĕн кĕтни пирки ăнлантарса панă.

Çар службинчен пăрăнакансен Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕпе паллашма тивет. Çавăн пекех прокуратура тата милици сотрудникĕсемпе те, уйрăмах участокри милиционерпа.

Саккун тăрăх пирĕн çĕршывра çар службине каяйманни валли е отсрочка илме 20 ытла сăлтав пур. Кун пирки тĕплĕнрех çар комиссариатĕнче ăнлантарса парĕç. Чăннипе калас пулсан, çара каяссинчен хăтăлмалли сăлтавсене шырама кирлĕ мар. Çавах сире шыраса тупаççĕ. Халĕ вара авланнисене те, ачисем пуррисене те çара илсе каяççĕ. Çамрăк чух, вăй-хал пур чухне, çар ретне тăрасахчĕ. 26 çула çитиччен тивĕçлĕ органсем сирĕнтен хăпмĕç. Кайран вара 18 çул тин тултарнисемпе пĕр тан службăра тăма çамăл пулмĕ. Çар службинчен пăрăнса юлтăм тесе каппайланма кирлĕ мар.

Яланах манăн асатте, атте, пичче, мучи, кукка – пурте салтакра пулнă вĕт-ха, тесе шухăшламалла. Сывлăх пур чухне çар тивĕçне пурнăçламах тăрăшмалла. Халĕ ĕçе вырнаçас пулсан та çар билетне пăхаççĕ. Çарта пулманнисен ĕçе вырнаçма йывăртарах.

Çар тивĕçне пурнăçлассинчен никам та пăрăнса юлаймĕ. Юратнă çĕршывăмăра – Раççее пирĕн сыхламаллах.

Сана çар комиссариатĕнче никам та япăх тăвасшăн мар. Çар комиссариачĕ сана çара ярать, вăлах сана кĕтсе те илет. Çартан таса та сывă тавраннасса шанать. «Чавса çывăх та – çыртма çук»,– тесе шухăшламалла ан пултăр.

Юлашкинчен çапла калас килет: «Çар службинчен ан хăра. Вăл тĕрĕссипе ĕнтĕ сахăр та, пыл та мар. Ĕнен, призывник, çартан тавраннсан сана тус-тăвансем ытларах кăмăллĕç, уйрăмах хĕрсем сан çинчен куç илмĕç». Çак сăмахсене эпĕ хам çартан тавраннă чухнехи вăхăтсене аса илнипе те çирĕплетме пултаратăп.

Сире, призывниксем, сывлăх сунса 1973-мĕш çулта призывра пулнă, халĕ запасри гварди аслă лейтенант

Б. ШУРНОВ.
Муркаш ялĕ.

Пĕтĕм Раççейри социаллă акци

«Паспорта çамрăкран упра»

Юлашки вăхăтра кредитпа финанс тĕлĕшĕпе çыхăннă преступленисем ытларах та ытларах тĕл пулаççĕ. Тупса палăртнă преступленисен мониторингĕ çавна çирĕплетсе парать: аслă вĕренӳ заведенийĕсем студенчĕсен паспорчĕсемпе усă курса коммерци организацийĕсем йĕркелеççĕ. Ку суя тата пĕр кунлăх фирмăсене йĕркелени предпринимательство ĕçне пуçăнассипе пачах çыхăнман. Вĕсен тĕллевĕ – юраман ĕç-хĕле пытарасси. Суя фирмăсемпе усă курса вара тĕрлĕрен ултав ĕçĕсем, саккунпа килĕшсе тăман банк ĕçĕ-хĕлĕ, суя предприниматель ĕçĕ-хĕлĕ туса ирттереççĕ, укçа-тенкĕ легализацилеççĕ, саккунсăр майпа кредитсем илеççĕ, налуксем тÿлессинчен пăрăнаççĕ т. ыт. те.

Асăннă йышши преступленисен шутне чакарас тĕллевпе РФ Шалти ĕçсен министерствин Экономика хăрушсăрлăх департаменчĕ тата ЧР Шалти ĕçсен министерствин экономика преступленийĕсемпе кĕрешекен управленийĕ кредитпа финанс сферинче оперативлă шырав мероприятийĕсен комплексне туса ирттернипе пĕрлех «Паспорта çамрăкран упра» ятпа пĕтĕм Раççейри социаллă акци ирттереççĕ. Вăл 2 тапхăрпа иртет: федераллă шайра тата Раççей субъекчĕсенче.

Социаллă акцин пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленнĕ ĕнтĕ, вăл 2009 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче тытăнăччĕ. Çав тапхăрта оперативлă сотрудниксем Мускав хулинчи чи пысăк 10 аслă вĕренӳ заведенийĕнче лекцисем вуланă. Акцин иккĕмĕш тапхăрĕ 2010 çулхи январĕн 11-мĕшĕнче пуçланать те кăçалхи мартăн 20-мĕшĕччен пырать.

ЧР Шалти ĕçсен министерствин Етĕрнери экономика преступленийĕсемпе кĕрешекен оперативлă шырав пайĕн сотрудникĕсем те çак акция хутшăнаççĕ. Эпир вĕренекенсемпе тĕрлĕ тĕл пулусем ирттерме, лекцисем вулама палăртатпăр.

Çавна палăртмалла. Хулана ытти çĕртен вĕренме пынă студентсенчен хăшĕсем çăмăллăнах укçа ĕçлесе илме ĕмĕтленеççĕ. Шăпах ĕнтĕ çакăн пек çамрăк çынсемпе интересленеççĕ те криминал ушкăнĕсем. Вĕсем студентсене ултавлă финанс операцийĕсене явăçтараççĕ. Хăш-пĕр чухне пĕр вĕренекен ячĕпе пĕр кунлăх темиçе фирма йĕркеленĕ тĕслĕхсене те тупса палăртнă, вĕсем урлă куçнă укçа-тенкĕ сумми вара миллиардшар тенкĕпе танлашать.

Сăмахран, Максим Н. студент Мускава провинцирен вĕренме килнĕ. Укçа кирлĕ пирки палламан çыннах хăйĕн ячĕпе темиçе организаци регистрацилеме ирĕк панă. Фирмăсене налук органĕсенче регистрацилене хыççăн вăл банксенче организацисен расчет счечĕсене уçнă, урăх çынсем ăна хатĕрлесе паракан документсене алă пуснă. Документсен пĕтĕм комплекчĕ ултавçăсен аллине куçнă. Çак услугăсемшĕн студента 1 пин тенкĕрен тытăнса 5 пин тенкĕ таран тÿлесе тăнă.

Çак фирмăсенчен пĕринпе – «Максимум» ятлипе – оперативниксем интересленме тытăннă. Ун урлă эрнесерен чикĕ леш енне вуншар миллиард тенкĕ куçарса тăнă. Кайран вара чикĕ леш енне пĕр чăрмавсăр укçа куçармалли суя фирмăсене татах нумай тупса палăртма май килнĕ.

Асăннă фактпа уголовнăй ĕç пуçарнă. Обысксем ирттернĕ май шута илмен татах 790 миллион тенкĕ укçа тупса палăртнă. Ăна чикĕ леш енне куçарма хатĕрленĕ пулнă. Следстви студент ячĕпе суя фирмăсем 50 ытла регистрациленине уçса панă. Студента уголовнăй майпа айăплама тивнĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Студентсем çапла майпа укçа ĕçлесе илме хăтланса хăйсен пурнăçĕшĕн хăрушлăх каларса тăратаççĕ. Преступлениллĕ схемăсем йĕркелекенсем вăхăт çитсен кирлĕ мар свидетельсенчен хăтăлма тăрăшаççĕ. Акă иртнĕ çул 24 çулхи Мускав çынни, филолог-студент, иккĕленÿллĕ лару-тăрура çĕре кĕчĕ. Унăн ячĕпе 36 фирма регистрациленĕ пулнă. Студент виллине Калуга облаçĕнче тупнă.

Хăйсен ячĕпе саккунсăр ĕç-хĕлпе çыхăннă фирмăсем регистрациленĕшĕн уголовнăй майпа айăплама пăхнă. Çавăнпа та саккуна пăсас çул çине тăрас марччĕ, хăвăра йывăрлăха кĕртсе ÿкерес марччĕ.

Социаллă акци вара малалла пырать.

И. ИЛЛАРИОНОВ,
ЧР Шалти ĕçсен министерствин Етĕрне хулинчи оперативлă шырав пайĕн пуçлăхĕ, милици майорĕ.